# Çĕнтерӳçĕсем манăçмаççĕ.

Кăçалхи Аслă Çĕнтерӳ уявне-Аслă Аттелĕх вăрçи çĕнтерӳпе вĕçленнĕренпе 70 çул тултарнине Раççей халăхĕ тата пĕтĕм прогрессивлă этемлĕх калама çук пысăк савăнăçпа паллă тăват. Мĕншĕн тесен хаяртан та хаяр тăшмана - фашизма çĕмĕрсе аркатнăранпа 70 çул çитет. Çакă вăл мире юратакан ĕç халăхĕшĕн паллă юбилей пулса тăрать.Çак вăрçă этемлĕх историнче пур вăрçăсенчен те чи йывăрри, чи хаярри пулнă.

Çĕнтерӳ патне пымалли çул питĕ вăрăм та йывăр пулнă. Совет салтакĕсем вăрçă хирĕнче 4 çул юн тăкса çапăçнă. Сахал мар хура-шур курма тивнĕ халăхăмăра, пайтах çухату тӳсме ирттӗрме тивнĕ ăна пурнăçпа вилĕм хушшинчи хаяр кĕрешӳре. Вырăс халăхĕпе пĕрле ытти наци çыннисем те Тăван çĕр-шыва хӳтĕлеме çĕкленнĕ.Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçине манăн ентешсем те нумайăн хутшăннă. Йăнтăрчă ял совет поселенине пурĕ виçĕ ял кĕрет: Йăнтăрчă, Улянкă, Тенеяль. Çак виçĕ ялтан аслă Аттелĕх вăрçине пурĕ 533 çын хутшăннă. Вĕсенчен 143 аслă вăрçă хирĕнче пуçĕсене хунă, хыпарсăр çухалнисем 184 çын, çĕнтерӳпе яла таврăннисем - 206 çын. Арçынсемпе танах вăрçа виçĕ ялтан 6 хĕрарăм хутшăннă. Паянхи куна виçĕ ялĕпе те 4 ветеран кăна пурăнать.Çак çĕнтерӳçĕсем хушшинче Илья Иванович Иванов – учитель-ветеран та пур.

И.И.Иванов 1919 çулхи июлĕн 26 мĕшĕнче Тенеялĕнче хресчен çемйинче çуралнă. Сăхăтпуçĕнчи 7 çул вĕренмелли шкул хыççăн Çĕрпӳри ял хуçалăх техникумне кĕрет. 2 çул вĕренсен Шупашкарти Чăваш пединститучĕ çумĕнчи хатĕрленӳ курсне каять. 1939 çулта Чăваш патшалăх пединститучĕн физикăпа математика факультетĕнче вĕренме тытăннă. Германи çарĕ Польшăна илсен студентсене салтака илнĕ. Илья Иванович 10 уйăх полк шкулĕнче вĕренет, унтан стрелковăй полкра пулемет отделенийĕн командирне лартнă.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансан И. Иванов чаçĕ çапăçса Хĕвел тухăçнелле чакса пынă. 1941 çулхи июлĕн 8 мĕшĕнче Илья Иванович аманнă, Конотоп хулинче госпитальте сипленнĕ. Сывалсан 2-мĕш бронепоезд çинче Харьков, Полтава, Миргород, Лисичанск, Ворошиловград хулисем таврвшĕнче нимĕççене хирĕç çапăçнă.

Унтан вăл Ленинградри çар училищинчен вĕренсе тухать, 1036-мĕш аркполкри 68 батарея командирĕ пулса Курск, Воронеж патĕнчи хаяр çапăçусене хутшăнать. I Украина фронтĕнче пулса нимĕççене хăвалать, Днепр, Одор шывĕсем каçнă чух тепĕр 2 хутчен аманать.

Каллех çапăçусем, çапăçусем …

1945-мĕш çулхи апрелĕн 22 мĕшĕнче Громфейтхолен ялне илессишĕн çапăçнă чух И.И.Иваноа лейтенант взвочĕ пĕр кунта нимĕççен виçĕ контратакине сирсе янă. Тăшманăн 2 батальона яхăн пехота, 15 ытла броньăллă машина пулнă. Çапăçура взвод 5 танк, 18 автомашина, 8 бронетранспортер, 150 яхăн нимĕç салтакĕпе офицерне тĕп тунă, 187 салтакпа офицера тыткăна илнĕ.

Çак çапăçушăн И.И.Иванова 13 армин Артиллерии командующийĕн приказĕпе 1945 çулхи майăн 18 мĕшĕнче Александр Невский орденĕпе наградăланă.

И.И.Иванов хăйĕн чаçĕпе Прага хули патне çитет.

Çапăçусенче паттăрлăхпа хăюллăх кăтартнă И.И.Иванова тата 3 хутчен Тăван çĕршыв аслă вăрçи, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕсемпе, 16 медальпе наградăланă.

1957-1967 çулсенче Эльпуçĕнчи вăтам шкулта военрукра вăй хунă. Кунта ĕçленĕ вăхăтра Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă.

1967 çулта Йăнтăрчăри 7 çул вĕренмелли шкулта военрукра, 1970 çултан директорта ĕçлет. 1977 çулта каллех военрукра тăрăшнă.

И.И.Иванов 1988 çулта тивĕçлĕ канăва тухнă. 2000 çулхи майăн 9 мĕшĕнче нимĕç фашисчĕсене çĕнтернĕренпе 55 çул тултарнă ятпа Мускавра ирттӗрнĕ парада хутшăннă, уншăн «2000 çулхи майăн 9 мĕшĕнчи парад участникĕ» паллă панă. Ку парадра Нӳшкассинчи Василий Павлович Павлов та пулнă, вăл 1945 çулхи июньте ирттӗрнĕ Çĕнтерӳ Парадне те хутшăннă. Паянхи кун вăрçă ветеранĕ хăйĕн ывăлĕпе пурăнать.Шкул ачисем вăрçă ветеранне манса каймаççĕ, кирлĕ вăхăтра пулăшма тăрăшаççĕ.

Васильева Галина, Йăнтăрчă

**Манăн асатте, Демьян Александрович Александров – фронтовик.**

Пирĕн ялта чи сумлă ветерансенчен пĕри пулнă Александров Демьян Александрович. Хăй вăхăтĕнче ăна таврари ялсенче кăна мар, республикипех пĕлнĕ. Вăтăр ултă çул вăл тăван «Новый путь» колхоз председателĕнче ĕçленĕ, кĕске хушăрах хуçалăха районта та, республикăра та малта пыраканнисен ретне тăратма пултарнă.

Демьян Александрович Сталинградран пуçласа Берлин таран хаяр вăрçăн вут-хĕмлĕ çулĕсене утса тухнă. Асатте пин те тăхăр çĕр çирĕм иккĕмĕш çулхи августăн улттăмĕшĕнче Хусан кĕпĕрнинчи Цивильск уесĕнчи Тенеялĕнчи хресчен çемйинче çуралнă. Унăн ашшĕ нимĕç фашисчĕсемпе çапăçса фронтра пуçне хунă. Амăшĕ ĕмер тăрăшĕпе колхозра вăй хунă. Ялти вĕренӳ çуртĕнче пĕлӳ илнĕ хыççăн Тăвайри вăтам шкула çул тытнă, унтан пин те тăхăр çĕр хĕрĕх пĕрремĕш çулта вĕренсе тухнă.

Аслă Аттелĕх вăрçи пуçлансанах хӳтлĕх трасси чавма, вăрман касма хутшăннă каччă.  Вăрçă пуçланни пирки асатте çапларах аса илсе çырнă:

- Пин те тăхăр çĕр хĕрĕх пĕрремĕш çулта эпĕ Тăвайри вăтам шкула вĕренсе пĕтертĕм. Аттестат илнĕ хыççăн пурте ярмăркканалла çул тытрăмăр. Тăвайĕнче ярмăркка кĕрлет. Карусельсем çаврăнаççĕ, халăх савăнать. Кăнтăрла иртсен Микула куккипе васкаса килелле кайрăмăр.

- Пĕлетĕн-и, Тимуш, паян вăрçă пуçланнă-вĕт,-тет вăл.

- Кам пуçланă? Хăçан? Ăнлансах пĕтерейменрĕм-ха.

- Николай Ахтимиров вăрçăчченех учительре ĕçленĕ. Вăл В. М. Молотов радиопа тухса каланине итленĕ- терĕ. - Пире салху пусрĕ. Сайра-хутра пĕр-пĕрне ыйтусем пара-пара, ыйтса-пĕлсе тăван яла çитрĕмĕр.

Вун тăххăрти каччă çакăн хыççăн тарăн шухăша путнă.

Пин те тăхăр çĕр хĕрĕх иккĕмĕш çулта ăна салтака илеççĕ. Малтан Тюмень хулинче пехота училищинче вĕренет, октябрь уйăхĕнче Сталинград хулине хӳтĕленĕ çĕрте пулемётчик пулса çапăçать. Асатте аса илĕвĕ тăрăх: Сталинграда вĕсене поездпа илсе кайнă. Поезд Сталинграда 250 çухрăм çитеймен. Германи самолечĕсем вĕçсе пырса бомбăсем тăкма пуçланă. Вара вĕсем çуран утнă. Каçхине çĕрĕпе утса кăнтăрла каннă. Сталинград çывăхнерех пырсан çĕрле хула хĕп-хĕрлĕ талккăшĕпех çуннине курнă,çул икĕ айккипе лаша виллисем, урапа, вăрçă техники выртнине асăрханă. Вĕсене хирĕç вĕçĕ-хĕррисĕр аманнă салтаксем утнă. Çапла вара вĕсем "96-мĕш отрядăн уйрăм бригади" составĕнче Сталинградăн кăнтăр хĕвел анăç енне çитнĕ.

Нимĕç окопĕсем пирĕннисенчен 80-100 метртра кăна пулнă. Вĕсем кунĕпе те çĕрĕпе пирĕннисем енне пулеметран, автоматран персе тăнă.

Самолетсем кашни кун шутсăр нумай бомбăсем пăрахнă, листовкăсем юр çунă пекех тăкăннă. Пирĕннисен окопĕсем нимĕçсеннипе питĕ çывăх пулнă пирки бомбăсем вĕсем çине сайра ӳкнĕ, хайсен салтакĕсене лектересрен хăраса вĕсем окопран инçерех ӳксе çĕре кисретнĕ. Çапла вĕсем 1942-мĕш çулта, октябрĕн 20-мĕшĕнче çунакан Сталинград çывăхĕнче 3-4 кун хушшинчех, вăйлă çапăçусенче пысăк çухатусем тӳснĕ полксене улăштарса оборона йышăннă.

Вăрçăра аманнă хыççăн пĕр хушă госпитальте сывалать, кайран Ленинград фронтĕнчи артиллери чаçне яраççĕ. Унта вăл разведчик-сăнавçă тивĕçĕсене аван пурнăçланă. Демьян Александрович саккăрмĕш арми составĕнче те çапăçнă. Ленинграда, Эстоние, Латвие, Польшăна ирĕке кăларма хутшăннă. Çĕнтерĕве Берлинта кĕтсе илнĕ.

Асатте аса илнĕ тăрăх, вăрçă вăхăтĕнче унăн паллă çар çыннисене те курма тӳр килнĕ. Генерал Еременкăна Демьян Александрович Сталинградра çапăçнă чухне курнă, маршал Рокоссовские - Польшăра.

Демьян Александровичпа юнашар чăваш ачисем те çапăçнă. Вĕсенчен Чутей ачи Мулаков, Улатăртан Плигускин, Вăрмар тăрăхĕнчен Трофимов, Куславкkаран Кудряшов Сталинград патĕнче пуçĕсене хунă.

Вăрçăра асатте  «Максимка» ятлă пулемётпа çапăçнă. Унпа юнашар вара чăваш халăхĕн паллă писателĕн, Никифор Мранькkан, ывăлĕ наводчик пулнă. Асатте асаилĕвĕ тăрăх - 1942 çулхи  октябрь вĕçнелле Мораньков ашшĕнчен çыру илнĕ. Çыруне асаттене те

вуласа панă. Унта ăна ашшĕ, Никифор Мранькка, нимĕç-фашисчĕсене пĕр хĕрхенмесĕр ăшалама хушнă.

-Хам умри тăшмана эпĕ пулеметпа ăшалама пултаратăп, анчах айккинчен е кайран персе пăрахма пултараççĕ ,- тенĕ ывăлĕ.

Ноябрĕн 3-мĕшĕнче вĕсен умĕнчи нимĕçсем вырнаçнă высотана илме приказ пулнă. Артподготовка хыççăн вĕсем нимĕçсен окопĕсем патнелле хырăмпа шуса кайнă. Анчах тăшман автоматсемпе, пулеметсемпе хытă пеме пуçланă. Окопсенчен пирĕннисен еннелле гранатăсем те ывăтма тытăннă. Пирĕн пехота çĕр çинче хускалмасăр выртнă. Çав вăхăтра Мораньков тăшман окопĕсем çийĕн вĕçĕ-хĕррисĕр пулеметпа шатăртаттарма пуçланă. Асатте Мораньковa çĕнĕрен те çĕнĕ пулемет лентисем парса тăнă. Вĕсем çине снайперсем тĕллесе пеме пуçланă, пульлисем пулеметăн щитне лекнипе пулемет сике-сике илнĕ. Унтан нимĕçсем вĕсем çине ултă стволлă минометсемпе пере пуçланă. Çак минăсенчен пĕри вĕсен пулемечĕнчен 7-8 метрта Мораньков енче çурăлса кайнă. Мораньковa осколоксем пуçранах амантнă. Асатте ăна санитарсем патне 30-40 метра çырма пуçне сĕтĕрсе кайнă. Хăй пулемет патне васканă. Кунĕпе çапăçнă хыççăн, каçпа вĕсем высотана илнĕ. Анчах вăл питĕ хакла кайса ларнă. Вĕсен ротинчен 200 çынтан хĕç-пăшал тытма пултаракан 35 çын кăна тăрса юлнă. Улатăр районĕнчен Плигускин, Куславка районĕнче Кудряшов тата ыттисем те çак высота умĕнче выртса юлнă. Пĕр хаяр çапăçура унăн юлташĕ Мораньков вилмеллех аманать. Асатте ăна çăлса хăварайманшăн чĕререн куляннă. Вăрçă хыççăн вăл унăн ашшĕпе тĕл пулса ывăлĕн паттăрла ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа кăтартнă. Темле вăйлă, хĕрӳ çапăçусенче те пуçне усман ветеран. Хамăр çĕр-шыва тăшмансенчен тасатас тесе пĕтĕм вăйран çапăçнă.

Анчах 1942 çулхи январĕн 28-мĕшĕнче Царица юхан шывĕ хĕрринче пĕр çуртшăн çапăçнă чухне ăна пуçран тата аллинчен амантаççĕ. Сывалма Саратов облаçĕнчи пĕр госпитале яраççĕ. Çакăнта вăл Сталинград хулине ирĕке кăларни çинчен илтет. Çакăншăн вăл мĕн тери хĕпĕртенине каласа та параяс çук. Госпитальте сывалнă чухне ăна «Сталинграда хӳтĕленĕшĕн» медаль парса чысласçĕ. Госпитальтен сывалса тухнă хыççăн Ленинград фронтне лекет, артиллерист, çав вăхăтрах разведчик-сăнавçă пулса тăрать. Çакăнта вăл хамăр районти Тĕмер çыннине Егор Жилкина тĕл пулать. Иккĕшĕ пĕрле çума-çумăн тăрса çапăçаççĕ. Эстоние, Ленинграда ирĕке кăларнăшăн ăна «Ленинграда сыхланăшăн», «Паттăрлăхшăн» медальсем парса чыс тăваççĕ.

Демьян Александрович Эстони, Латви, Литва, Польша çĕрĕсене ирĕке кăларнă çĕре хутшăннă. Одер, Шпрея шывĕсем урлă каçса Германи çĕрĕ çине кĕрсе кайнă. Вăл çапăçакан полк Берлин хули патнелле çывхарнă. Ку хулашăн пите вăйлă çапăçусем пулнине аса илнĕ ветеран. Кашни çуртшăн юнлă çапăçу пулнă, тепĕр чухне алă вĕççĕн те тытăçса кайнă. Ветеран рейхсаг патне çитнĕ, анчах унта алă пусса хăварайманнишĕн кăштах пăшăрханнă.

Тепĕр икĕ кунтан вĕсен полкне Берлин çывăхĕнчи пĕр вăрмана илсе тухаççĕ. Çĕнтерӳ кунне çакăнта кĕтсе илет те асатте. Унăн куçĕнчен савăнăç куççулĕ юхнă, хăйсем çĕнтернĕшĕн чунтан савăннă. Ветеран кăкăрĕ çинче тваттăмĕш медаль «Берлина илнĕшĕн» ялкăшнă. Каярахпа ăна 1 степеньлĕ Отечествелла вăрçă орденĕ парса чыс тунă.

Çĕнтерӳ кунне Берлинра уявласа ирттернĕ. Çапăçури паттăрлăхшăн Демьян Александровича Тăван çĕршывăн аслă вăрçин 1 степньлĕ орденĕпе, икĕ хутчен «Хастарлăхшăн» медальпе, «Сталинграда хӳтĕленĕшĕн», «Ленинграда хӳтĕленĕшĕн», «Берлина илнĕшĕн» медальсемпе наградăланă.

Вăрçă хыççăн асаттене Томск хулинчи артиллери училищине вĕренме янă, икĕ çултан, амăшĕ ыйтнипе, Тенеяльне таврăннă. Яла таврăнсан çамрăк салтак алла усса ларман. 1947-1949 мĕш çулсенче асатте «Новый путь» колхозра рядовой колхозник, 1949-1951- мĕш çулсенче колхозри ГЭС тунă çĕрте десятник пулса ĕçлет. ГЭС-а туса пĕтерсе хута яраççĕ. 1951-1953-мĕш çулсенче ВКП(б) райкомĕн пропогандисчĕ пулса ĕçленĕ. 1953 çулта КПСС райкомĕн отдел ертӳçин заместителĕ пулнă. Пин те тăхăр çĕр аллă виççĕмĕш çулта ăна «Новый путь» колхоза ертсе пыма шанаççĕ. Çак ĕçре вăл вăтăр ултă çул вăй хунă. Хăйĕн ĕçне чунне парса ĕçленĕшĕн, хуçалăха тăрăшуллă та пултаруллă ертсе

пынăшăн вăл «Октябрьти революци», «Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав» тата «Хисеп палли» орденсем илме тивĕç пулнă.

Ман асатте Александров Демьян Александрович пĕтĕм вăйне тăван хуçалăха çирĕплетнĕ çĕре панă.

Вăл ĕçленĕ вăхăтра колхоз яланах малтисен ретĕнче пулнă. Колхозниксен пурнăç шайĕ çултан çул ӳссе пынă. Ĕç укçи те ӳссе пынă. Пĕрчĕллĕ йышши культурăсен тухăçĕ гектартан тăватă хут, выльăх апачĕлĕх культурисен тухăçĕ 5 хут, çĕр гектар пуçне сĕт 380 центнер, какай 150 центнер таран ӳснĕ. Хуçалăх нихăçан та кивçене кĕмен. Колхозра ĕçлекен 18 колхозник ĕçри çитĕнӳсемшĕн орденсемпе медальсем илме тивĕç пулнă. Государствăна продукци сутассине колхоз яланах плана иртерсе пурнăçланă.

Асаттене Чăваш АССР-ĕн хисеплĕ ял-хуçалăхĕн ĕçченĕ, Раççей Федерацийĕн ял-хуçалăхен хисеплĕ ĕçченĕ ятне илме те тивĕç пулнă, Чăваш АССР-ĕн Верховный Совечĕн депутатне те суйланă ăна. Асатте çынсене йывăр вăхăтра яланах ырă канашсем парса пулăшнă, ял халăхĕ тулăх та ытлă-çитлĕ пурăнтăр тесе тăрăшнă

Асатте, манăн асаннепе, Нина Клементьевнăпа, ултă ача çуратса пурне те çĕршыва юрăхлă çынсем тунă. Ачисем пурте аслă пĕлӳ илнĕ.Асатте ĕçне пĕр хушă унăн ывăлĕ, манăн атте, тăсрĕ. Вăл та „Новый путь“ колхоза 10 çул ытла ертсе пычĕ.

Эпир, унăн 13 мăнукĕ тата 5 мăнукĕн мăнукĕсем, асатте çакăн пек ырă кăмăллă, ĕçчен, тараватт, сăпайлă, мал ĕмĕтлĕ çын пулнишĕн чунтан хĕпĕртетпĕр. Вăл пирĕншĕн яланах çул маякĕ пекех, эпир унран тĕслĕх илетпĕр, унпа мухтанатпăр та мăнаçланатпăр.

Шел пулин те, пирĕн хушăра юратнă асатте, сумлă ветеран текех çук ĕнтĕ. Анчах унăн çутă сăнарĕ, сумлă ĕçĕсем яланах пирĕн чĕререн, халăх асĕнчен тухмĕç. Эпир, çамрăксем, вĕсем умĕнче пуçа таятпăр, вĕсем пирĕншĕн яланах тĕслĕх пулса тăрĕç.

Александров Алексей, Йăнтăрчă шкулĕ

**Ман юратнă асатте**

Манăн асттене Андреев Михаил Андреевич тесе чĕнеççĕ. Вăл 1926 çулхи чӳк уйăхĕнче, Тăвай районне кĕрекен Йăнтăрчă ялĕнче хресчен çемйинче çуралса ӳснĕ. Вĕсен çемйи пысăк пулнă.1930 çулта, колхозсем йĕркеленме пуçласан, вĕсен çемйи колхоза кĕрет. 1934 çулта асатте Йăнтăрчăри çичĕ çул вĕренмелли шкулăн пĕрремĕш класне каять. 1941 çулта, Аттелĕх вăрçи пуçланнă çул, асатте çичĕ класс пĕтернĕ. Пурнăç çăмăл пулман. Асатте ытти çынсемпе пĕрле колхозра вăй хунă,тырă вырнă, тырă турттарнă, патшалăха Урмарти элеватора лашапа тырă леçнĕ. Пирĕн хĕрлĕ çар фашиста частарах çапса аркаттăр тесе мĕн пур вăйне парса ĕçленĕ. Ялти шкултан вĕренсе тухсан асатте Тăвайĕнчи вăтам шкула вĕренме каять. Анчах та ăна кунта малалла вĕренме тӳр килмест. Вĕреннĕ вăхăтра Челябинск хулинчи ФЗО шкулне каймалла тăваççĕ. Унта каяс мар тесе асатте Канашри вагонсем юсакан заводра фрезеровщика вĕренет, пĕр хушă унта ĕçлет. Колхозран паспорт илме хут паман пирки асаттен Канашри ĕçре пăрахма тивет. Вара вăл яла таврăнса колхозра ĕçлеме пуçлать. Тимĕрçĕ лаççинче тимĕрçĕ пулса ĕçлет, лашапа тырă выракан машинăсене юсать.

1943 çулхи чӳк уйăхĕнче асаттене Хĕрлĕ çара илеççĕ. Малтанхи тватă уйăхра вăл запасри полкра вĕренет. 1944 çулхи февраль уйăхĕнче Ленинград хулине илсе каяççĕ. Унта вăл сывлăшра хӳтĕлекен Ленинград армийĕн аэростатсен 4-мĕш полкĕнче аэростат расчечен номерĕ пулса Ленинград хулине хӳтĕлет. 1944 çулхи июль уйăхĕнче Финлянди патшалăхĕ Гитлер пĕрлĕхĕнчен тухса Совет Союзĕпе мирлĕ килĕшӳ тусан, Лениград хулин хăрушлăхĕ чакать, çакăн хыççăн асаттесен полкне салатса яраççĕ. Кун хыççăн асаттене артиллерист-тапогрофа вĕренме яраççĕ. Унта вăл пилĕк уйăх вĕренсе кĕçĕн командир пулса тăрать. Ун хыççăн çĕнĕрен йĕркеленекен уйрăм разведкăлла артиллери дивизионне лексе, ăна топографсен отделени командирĕ пулма уйăрса лартаççĕ.

Телее пула асаттен çĕнĕрен йĕркеленĕ чаçĕ, фронта тухса каяс умĕн Аслă Аттелĕх вăрçи чарăнать, çавăнпа та эпир мĕнле вăйлă савăнтăмăр тесе калать асатте.

Вăрçă чарăннă хыççăн асатте Украинăра службăра тăрать. Çичĕ çул çар службинче тăрса 1950 çулта асатте старшина званийĕпе тăван ялне таврăнать.

Яла таврăнсен Тĕрлемесри бухгалтерсен шкулне вĕренме кĕрет. Вĕренсе пĕтерсен тĕрлĕ организацисенче мĕн пенсие тухиччченех бухгалтер пулса ĕçленĕ.

Асатте 1954 çулта Петрова Раиса Петровнăпа çемье çавăраççĕ. Вĕсем пилĕк ывăлне пурнăç çулĕ çине кăларнă. Манă пиччесем пурте Совет çарĕнче службăра тăнă. Славикпа Коля пичче тата манăн атте Германире службăра пулнă. Валери тете Афганистанри вăрçа хутшăннă. Паянхи кун та асатте вăрçă кунĕсене аса илет, çĕр çинче яланах тăнăç пурнăç пултăр тет. Эпĕ хамăн асаттепе тивĕçлипех мухтанатăп. Вăл мана яланах ырă канашсем парса пулăшать, эпир унран яланах тĕслĕх илетпĕр.

Андреев Михаил, Йăнтăрчă шкулĕ

**Г.Ф.Федоров ветеран асаилĕвĕ тăрăх**

Йăнтăрчă ялĕнчен Аслă Аттелĕх вăрçине чылайăн хутшăннă. Вĕсенчен пĕри- Г.Ф.Федоров. „Часах иккĕмĕш тĕнче вăрçи пĕтнĕренпе 65 çул çитет. Шкул ачисем ыйтнипе хамăн вăрçăри ĕç-пуçăмпа паллаштарас тетĕп.

Эпĕ 1942-мĕш çулта, февраль уйăхĕн пуçламăшĕнче вăрçа тухса кайрăм. Малтанхи вăхăтра Шупашкарта, Атăл леш енче вĕрентĕмĕр, унтан Мускавра çывĕхĕнчи Клин, Солнечногорск хулисенче, кайран Куйбышев хули çывăхĕнче заводсене сыхларăмăр.

1944-мĕш çулта Ленинград хулине блокадăран хăтарнă хыççăн Ленинград фронтне лекрĕм. Ленинградран 120 км.вырнаçнă Выборг хулине ирĕке кăларнă çĕрте çапăçрăм. Ку вырăн тĕлĕнмелле илемлĕччĕ. Унта пӳрт пысăкăш чулсем выртаççĕ тата мĕнле чулсем – мрамор - кăвакки, шурри...

Кунта эпĕ çăмăл аманнă хыççăн госпитальте сиплентĕм. Кунта çакна каласа хăварам-ха: Ураскасси ачи, Лазарев Федор, ман сурана çыхса ячĕ. Тĕлĕнмелле лайăх юлташчĕ вăл. Мана вилĕмрен те, плена лекесрен те çăлса хăварчĕ. Çĕрле, снарядсем илсе килнĕ чухне, эпир финсем патне пырса тухнă. Юрать-ха, çак Федор ют чĕлхепе калаçнине илтсе чарăнса тăтăмăр та каялла шурăмăр. Федор аманиччченех пĕрле нимĕççемпе çапăçрăмăр. Хăй шӳтлесе çапла калать:"Федоров, хăвăртрах аман, ленинградри госпитальте пĕрле выртăпăр", - терĕ.

Ачасем, туслă пурăнăр, пур çĕрте те туслăх кирлĕ, йывăр вăхăтра инкеке лексен, уйрăмах вăрçăра туслăх çăлать. Лазарев Федор халĕ пирĕнпе çук ĕнтĕ. Эпир унпа вăрçă хыççăн яланах тĕл пулаттăмăр. Вăл вăрçă хыççăн паркра заправщик пулса ĕçлетчĕ. Учитель те пулнă.

Выборг хулине ирĕке кăларма çăмăлах пулмарĕ. Анчах салтаксем маттур пулчĕç. Çак çпăçура пĕр салтак вилчĕ, икĕ салтак аманчĕ. Салтаксене санпоста илсе çитертĕмĕр. Каялла килнĕ чухне пĕр сарай умĕнче лашасене тăварса кăкартăмăр та шалалла кĕтĕмĕр. Сарайĕнче виçĕ салтак лараççĕ. Эпĕ кĕрсе тăрсан вĕсенчен пĕри мана палласа илчĕ те ман ята desired калаpĕ. Эпĕ те ун çине тĕлĕнсн пăхатăп. Ку вара Тенеяль çынни, Михаил Данилов пулчĕ. Ăна курсан куççуль тухрĕ. Кайран вара эпĕ анне патне, вăл арăмĕ патне çыру çыртăмăр. Вăрçă пĕтсен кашни çулах пĕр-пĕрин патне хăнана çӳреттĕмĕрччĕ.

1944-мĕш çултхи август уйăхĕнче мана Боружный фронтне куçарчĕç. Пĕр çапăçура мана ураран амантрĕç. Каунас хулинче нумай та выртмарăм, пире Башкирине, Уфа хулине илсе кайрĕç. Госпитальте ноябрь уйăхĕнчен пуçласа март уйăхĕччен сиплентĕм. Апрель уйăхĕнче Астраханьте пултăм, Çĕнтерӳ кунне тк çакăнтах кĕтсе илтĕм.

1945-мĕш çулхи ноябрь уйăхĕнче киле таврăнтăм та ĕçлеме пуçларăм. (Паянхи кун Йăнтăрчă ялĕнче вунă ветеран пурăнать). Вăрçăра паттăрлăх кăтартнăшăн çак медальсемпе орденсене тивĕçрĕм –орден"За боевые заслуги" ,орден Отечественной войны", „Медаль Жукова" тата ыт те."

Г.Ф.Федоров Йӑнтӑрчӑри вӑтам шкулта учительре ӗҫлесе пенсие тухнӑ. Паянхи кун та пурӑнать-ха. Ҫамрӑк ӑрӑва воспитани парас ӗҫре те айккинче юлмасть.

Асаилӗве 2000-мӗш ҫулта Калистратова Татьяна ҫырса илнӗ.